**Экспромт**

В. П. Эхмере

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр —

Куç-пуç çуталать,
Çӳхе тути йăл кулать,
Яштак пилĕк авăнать,
Чăмăр кăкри хумханать...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр —

Маншăн куçĕ çуталмасть,
Çӳхе тути йăл кулмасть,
Яштак пилĕк авăнмасть,
Чăмăр кăкри хумханмасть...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр —

Ман еннелле çавăрăнмасть,
Ылтăн пуçне каçăртать,
Мăн кăмăлне палăртать —
Ман чĕрене çунтарать...

1910

*Павлов, Ф. П. Экспромт : сăвă / Ф. П. Павлов // Павлов, Ф. П. Çырнисен пуххи / Ф. П. Павлов. – Шупашкар, 1992. – С. 56.*